ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

12 (4426) №№, 2015, март /пуш/, 26
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Ай, выляр-и, кулар-и те... «Тантăша» çыру çырар-и?



***Паян та ир-ирех ташласа тухрĕ хĕвел. Çуртсен чӳречисенчен йăлтăртаттарса пăхрĕ. Ачасем çывăраççĕ-ха. Хĕвел хăй шевлине вĕсен пит-куçĕ çине ачашшăн сапаларĕ. Капла кам вăранмасăр вырттăр? Кашниех сиксе тăчĕ те чупса тухрĕ урама. Мĕн тери лайăх кун паян! Савăнас, кулас, чупас килет.***

Виççĕмĕш чĕрĕке лайăх паллăсемпе вĕçленĕ Сергей Александров та ларма-тăма пĕлмест авă. Йăлт та ялт сиккелет. Юлташĕсем курăнмаççĕ-ши тесе çул еннелле пăхкалать. Чим, чим! Авă килеççĕ пĕрле вĕренекен тусĕсем! Хаваслăн ыткăнчĕ вĕсене хирĕç арçын ача. Августина Тимофеева, Эльвира Петрова тата Кирилл Никитин та уттисене хăвăртлатрĕç. Тĕл пулчĕç те тахçантанпах курман евĕр пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç.

Каникула кайнă виççĕмĕш класс ачисем мĕн тĕрлĕ вăйă вылямарĕç-ши паян? Каласа та пĕтерме çук. Каç енне йĕп-йĕпех пулчĕç. Хăйсем паян кунĕпех апат çименнине аса илсен килĕсене пуçтарăнма пуçларĕç.

– Пире класс ертӳçи Ангелина Иосифовна каникулта кĕнеке вулама калаçнине манман. Киле çитсен килĕшекен калава пăхса тухăп. Хыççăнах «Тантăш» хаçат валли материал çырăп. Ара, пирĕн тăрăха тахçанах кайăксем вĕçсе килни çинчен хыпарласшăн-ха. Паян çак ĕçе пурнăçлатăпах. Нумай пулмасть кукамай çинчен редакцие çыру ятăм. Заметка хаçатра пичетленсен мĕн тери савăнтăм! Эпĕ çеç-и, кукамай та! Юратнă çыннăм ĕмĕрĕпех шкулта ачасене вĕрентнĕ, паян та мана кирлĕ чухне сĕнӳ-канаш пама та ӳркенмест. Эпĕ унăн кашни сăмахне ăша хыватăп. Пĕлетĕр-и тата? Вăл пĕçернĕ кукăле мĕн тери юратса çиетĕп! – мăнаçланчĕ Сергей йĕпеннĕ курткине аллипе сăтăркаланă май.

– Хаçатра эсĕ çырнине курнăччĕ-ха. Кăсăклансах вуларăм. Сергей, санран тĕслĕх илсе, тен, манăн та юратнă кăларăмпа çыхăну тытмалла. Э? Анчах кăшт шикленетĕп. Пултарăп-ши çырма? – терĕ Эльвира Петрова йывăç çумне таянса.

– Эльвира, эпир сан шухăшна ырлатпăр çеç. Атя, эсĕ те Сергей пек алла ручка тыт. Кайран вара эпир те санран тĕслĕх илме тăрăшăпăр, – хавхалануллăн калаçрĕç Августина Тимофеевăпа Кирилл Никитин.

Каланă сăмаха çилпе вĕçтерес темеççĕ туссем. Унсăр пуçне «Тантăш» хаçат та, «Тетте» журнал та çитес çурçула çырăнса илесшĕн маттурсем.

***Элиза ВАЛАНС.***

Муркаш районĕ,
Сосновка шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

## Урра! «Тетте» килчĕ, «Тетте»!..



Виççĕмĕш класра вĕренекенсем хальхинче те урока хаваслă туйăмпа вырнаçса ларчĕç. Пĕлӳ тĕнчин нумай вăрттăнлăхне алла илчĕç, чылай çĕннине пĕлчĕç. Хальччен илтмен пĕр-пĕр çĕнни пирки вĕрентекен каласанах, ăна ыйту çине ыйту параççĕ, тупсăмне вĕçне çитиччен пĕлмесĕр вара ниепле те лăпланмаççĕ. Урокĕ ытла та хăвăрт иртнишĕн тепĕр чухне кулянса ассăн та сывлаççĕ виççĕмĕшсем. «Тата темĕн интересли те пĕлме пулатчĕ-çке...», – теççĕ хăйсем.

Тĕпчеме юратнăран, нумай çĕннине пĕлме тăрăшнăранах вĕрентекене ыйту хыççăн ыйту параççĕ. Тавракурăма татах та анлăлатчăр тесе вĕсене библиотекăна та кайма сĕнетĕп.

Маттурскерсем вара шкул библиотекине васкаççĕ. Кашни хăйне килĕшекен юмах е калав кĕнекине алла илме васкать. Пуринчен ытла вара вĕсене нумай тĕспе пичетленекен «Тетте» журнал килĕшет.

Журнала кунта шкулĕпех çырăнса илеççĕ тесен те йăнăш мар. Сакăрвунна яхăн вĕренекен «Теттепе» туслă. Унти юмахсене, калавсене, тĕрлĕ пуçватмăша кăмăлласçĕ кĕçĕннисем. Çĕнĕ конкурспа викторинăна хаваспах хутшăнаççĕ. Класри çамрăк художниксем ӳкерчĕксем сĕнеççĕ. Журналта ачасен сăвви-калавĕ те пичетленет. «Пирĕн чи юратнă журнал вăл», – теççĕ пĕчĕкскерсем.

Кĕçĕн классенче вĕрентекенсем журналпа уроксенче те усă кураççĕ.

«Урра! «Тетте» килчĕ, «Тетте» сăмахсене илтме епле савăнăçлă. Ачасен савăнăçĕ капашсăр пысăк.

***Алина ПЕТРОВА,***
***3 класс вĕрентекенĕ.***

Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.
**Сăнӳкерчĕкре**: алăра – "Тетте".

# Интернет хăрушлăхĕ



Интернет çын пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăна пуçларĕ. Кирек епле ыйту хуравне кĕнекере шырамастпăр, хаçатра вуласа пĕлместпĕр, пĕтĕмпех Интернетра информаци тупма тăрăшатпăр. Пĕр енчен çакă лайăх та. Вăхăта перекетлетпĕр, самантрах пур ыйту çине хурав тупатпăр. Тепĕр енчен – пурте Интернетпа тĕрĕс усă курма пĕлместпĕр иккен. Унти хăрушлăхсенчен ачасене мĕнлерех хӳтĕлемелле-ши? Ку ҫивĕч ыйтусенчен пĕри. Нумай пулмасть Наци библиотекинче ку тĕлĕшпе саккуна сыхлакан органсем ятарлă конференци ирттерчĕç.

Хальхи саманари ачасем питĕ ăслă. Вĕсем компьютерпа та, тĕрлĕ телефон моделĕпе те усă курма пĕлеççĕ. Паллах, чылайăшĕ Интернетра çывăх туслашнă. Пĕрремĕш класранах тĕнчипе палăрнă «в контакте» социаллă «тетелте» лараççĕ. Ачасем пĕчĕк, нимĕн те ăнланмаççĕ тейĕн, анчах ку йăнăш. Иртнĕ çулсенче 4-мĕш класри арçын ача шкул сайчĕн парольне çĕмĕрсе кĕрсе хăйĕн паллисене тӳрлетни те пулнă. Халĕ ачисем ашшĕ амăшĕнчен нумайрах пĕлеççĕ.

Вăтам класри тата аслăраххисем никама пăхăнмасăр пурăнасшăн. Чылайăшĕ хăй тĕллĕн укçа ĕçлесе илме тăрăшать. Ĕçне вара, паллах, Интернетра шыраççĕ. Тем тĕрлĕ пĕлтерӳ те пур унта. Вĕсен хушшинче ултавлисем те йышлă. Хайхисем ĕç укçине пысăкрах палăртса хăйсен енне илĕртеççĕ. Çаксен хушшинче наркăмăшпа çыхăннă пĕлтерӳсем те тĕлпулаççĕ. Хĕрсем, арçын ачасем çакна ăнланмасăрах вĕсемпе çыхăну тытма васкаççĕ. Ку ăçта илсе çитерни паллă ĕнтĕ.

Ашшĕ амăшне ачисемпе туслă пулма, йывăр самантсенче итлеме сĕнчĕç специалистсем. Çамрăк ăру тĕрĕс-тĕкел çитĕнесси чи малтан аслисенчен килет.

*Кристина БАЙБАТОРОВА.*

# Манăн туслă çемье

Эпĕ Ирина ятлă. Эпир çемьере пиллĕкĕн: эпĕ, атте, анне, икĕ аппа. Аппа Аня ятлă. Вăл студентка.

Манăн йĕкĕреш аппа та пур. Ăна Марина тесе чĕнеççĕ. Эпир вунпĕр çулта. Шупашкарти улттăмĕш шкулта вĕренетпĕр. Ташлама, юрлама, ӳкерме юрататпăр.





Анне, Лариса Николаевна, шкулта ĕçлет. Вăл тĕрлĕ апат хатĕрлеме ăста. Час-часах пире тата хăнасене тутлă апат-çимĕçпе сăйлать. Анне ырă кăмăллă та ĕçчен. Манăн та ун пек пулма тăрăшасчĕ.

Атте вара, Андрей Викторович, чăн-чăн ылтăн алăллă. Вăл тем те тума, ăсталама, юсама пĕлет.

Пирĕн çемье питĕ туслă. Эпир пушă вăхăта пĕрле ирттерме тăрăшатпăр. Шел пулин те, пысăк уявсенче яланах пуçтарăнаймастпăр.

Кашни çул январĕн пĕрремĕшĕнче юратнă асаннене Çĕнĕ çул ячĕпе саламлама каятпăр. Мартăн 8-мĕшĕнче вара – çуралнă тата Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕсен ячĕпе.



Çуркунне тата кĕркунне эпир яла çӳретпĕр. Уçă сывлăшра канатпăр, вылятпăр, хĕвелпе хĕртĕнетпĕр. Пахчара та ĕçлетпĕр: çум çумлатпăр, йăрансене кăпкалататпăр, шăваратпăр. Унта эпир тĕрлĕ чечек, пахча-çимĕç пăхса ӳстеретпĕр.

Çулла, каникул вăхăтĕнче çăмăл машинăпа тĕрлĕ вырăна тухса çӳреме килĕшет пире. Атте таçта илсе çитерет! Пĕрле пире питĕ аван!

*Ирина МУДРАКОВА.*

Шупашкар,
6-мĕш шкул.

# Шкул тата çемье — яланах пĕрле

Пирĕн шкул вĕренекенсен ашшĕамăшĕпе тачă çыхăнса ĕçлет. Çавăнпа та хальхинче иртнĕ «Шкул тата çемье – яланах пĕрле» уçă алăксен кунне хăна нумай килчĕ. Ку мероприятие йĕркелесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Çав кун вĕрентекенсем çĕнĕ мелсемпе усă курса уçă уроксем ирттерчĕç, ашшĕ-амăшне хумхантаракан ыйтусене хуравларĕç, тĕрлĕ курав йĕркелерĕç. Ачасем вĕрентекенсемпе пĕрле «Чечеклен, Чăваш ен, юрлатпăр сан çинчен» концерт программи хатĕрлерĕç. Ачасем куракансене чăваш юрри-ташшипе савăнтарчĕç. Пурте çамрăк артистсен пултарулăхне пысăк хак пачĕç, асăнмалăх парнесемпе хавхалантарчĕç.

Хăнасене «Вĕрентекенсен пултарулăх тĕнчи» курав питех те тыткăнларĕ. Кунта вĕтĕ шăрçасенчен тĕрленĕ ĕçсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнаççĕ. Унсăр пуçне ачасем ĕç урокĕнче тунă çар техникин макечĕсем интереслĕ пулнине те палăртрĕç. Уçă алăксен кунĕнчех «Асамлăх тĕнчи» музей та халăха хапăлласа йышăнчĕ. Музея пуçараканĕ – тăван ен культурине вĕрентекен Галина Алексеевна Афанасьева.

«Çакăн пек мероприяти ашшĕамăшне шкул ĕçĕ-хĕлĕпе интереслентерессине вăйлатать, вĕренӳ пахалăхне çӳллĕ шая çĕклеме май парать», – терĕ пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ май шкул директорĕ Алевтина Николаевна Федорова.

*Ирина ВЛАСОВА,*
*Антонина ПЕТРОВА,*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенсем.*

Шупашкар,
47-мĕш шкул.


## Ăшă саламсем

*Саламсене пĕлтермелли номерсем:*
89876741833
89051975911

Вăрмарта пурăнакан лара-тăра пĕлмен хастар çыравçă **Валентина Николаевна ХРИСТОФОРОВА** ыран хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Эпир ăна чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми телей, пур çĕрте те ăнăçупа юрату сунатпăр.

*Елена ФОМИНА* (Тăвай районĕ),
*Нина МИХАЙЛОВА* (Элĕк районĕ).

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче пурăнакан, клубра тимлекен, илемлĕ сассипе ял халăхне савăнтаракан **Светлана Алексеевна ЕФРЕМОВА** хăйĕн çавра çуралнă кунне паллă тăвать. Пур енчен те çаврăнăçуллăскере питĕ хисеплетпĕр. Çирĕп сывлăх, тулли телей сунатпăр.

*Ял-йыш.*

Элĕк районĕ, Мăн Карачура.

✧ ✧ ✧

Нумаях пулмасть пирĕн юратнă анне, кукамай, аппа **Валентина Григорьевна ЩЕРБИГИНА** 92 çул тултарчĕ. Эпир ăна çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Чи малтанах сывлăх сунатпăр! Сывлăх пулсан килĕшӳ те, ăнлану та, телей те, ăнăçу та – пурте юнашар пулĕç. Ача-пăча сасси килте янрасах тăтăр! Чи хаклă çыннăм, эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр татах та нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăн!

*Саламлаканĕ*
*мăнукĕ Мария САМДЕЛОВА.*


# Уçă урокри тишкерӳ

Шкулта иртнĕ уçă уроксене районти пĕлӳ çурчĕсен директорĕсем хак пама килни малтанах чылайăшне самаях пăшăрхантарчĕ. Анчах кунашкал ĕçлĕ тĕл пулу пĕрремĕш хут çеç мар пулнине аса илсен лăпланма та тиврĕ.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Мария Зиновьевна Табакова вунпĕрмĕшсемпе Юрий Скворцов çыравçăн пурнăçĕпе пултарулăхне тишкерчĕ. Валентина Петровна Яковлева вара тăван литературăн асамлăх тĕнчине илсе кĕчĕ улттăмĕш класра вĕренекенсене.

Вунпĕрмĕшсем чи малтанах çыравçăн пурнăçĕпе çыхăннă интереслĕ самантсене пăхса тухрĕç. Паллăрах произведенийĕсене тишкернĕ чухне Юрий Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçри Таньăна кăркăс çыравçин Чингиз Айтматовăн «Первый учитель» хайлаври Алтынай сăнарĕпе танлаштарчĕç. Интереслĕ тишкерӳсемпе, танлаштарусемпе хакларĕç Скворцов пултарулăхне.

Вĕрентекенсем ачасене чăннипех те юратнине, вĕсен ĕçĕ-хĕлне çамрăксем хисепленине туйрĕç урока итлекенсем. Ачасем те пуçаруллă пулни, тишкерӳсем тума пĕлни хăнасене савăнтарчĕ.

*Галина МУЛЮКОВА,*
*ЧПУ студентки.*

Патăрьел районĕ,
Тури Туçа вăтам шкулĕ.


Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
К.БАЙБАТОРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1799 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1098
Пичете март уйăхĕн 25-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш
12 №, 2015, март, 26



ФЕСТИВАЛЬ

# Халăх хитре – йăлипе



Республика вĕренӳ институтĕнче «Халăх хитре – йăлипе» ача-пăча фестивалĕ иртрĕ. Унта Шупашкар хулин «Чăваш чĕлхине анлăн вĕрентнĕ май ачасене пур енлĕн аталантарасси» проектпа ĕçлекен 10-мĕш, 35-мĕш тата 59-мĕш шкулĕсен 1-5-мĕш класĕсенче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Çак фестиваль хула шкулĕсенче чăваш чĕлхипе культурине вĕрентнин пĕлтерĕшне ӳстересси пулчĕ. Унсăр пусне çамрăк ăрăва халăх культурипе, ăс-



хакăлĕпе, шухăш-кăмăл пуянлăхĕпе паллаштарасси те. Ачасене чăваш чĕлхине юратса вĕренме хавхалантарассине, тăван халăх йăли-йĕркине хисеплеме, юратма, хаклама вĕрентессине те тимлеççĕ. Уява хутшăнакан 10-мĕш шкулăн 1-мĕш «и» класс ачисем – «Улăхра. Ача-пăча вăййи», 2 тата 4-мĕш «и» классенчисем чăваш ача-пăча вăййине, 5-мĕш «и» класра вĕренекенсем Сурхурие хутшăнчĕç. 35-мĕш шкулăн 2-мĕш «л» класс «Вăйă картине» тăчĕ. 3-мĕш «э» класс ачисем – «Улахра» ларчĕç, 59-мĕш шкулăн 4-мĕш «я» класрисем «Улах» мешехисене кăтартса пачĕç. Кашниех чăваш халăхĕн ырă йăли-йĕркин çепĕç юррипе, илемлĕ ташшипе, янăравлă сăвă-такмакĕпе, хаваслă вăййи-куллипе хăйне май паллаштарчĕ. Кашни йăла, уяв хăйĕн асамлăхĕпе, илĕртӳлĕхĕпе тата тарăн шухăшĕпе паха пулчĕ. Вĕсенче ача-пăча сăвă калама, юрлама, ташлама, шутлама пултарнине, ал ĕçĕсене тума пĕлнине, тавçăруллă пулнине, пĕрпĕринпе хутшăнса туслă пулмаллине кăтартрĕç. Жюри чăвашла тĕрĕс калаçма пултарнине, пуплев тасалăхне, юрраташша пĕлнине, артист ăсталăхне, уявпа вăййа кăтартас маçтăрлăха тата наци тумне пĕлсе тăхăнма пултарнине пăхса хакларĕ. 1-мĕш вырăн 35-мĕш шкулăн 3-мĕш «э», 2-мĕш вырăн 10-мĕш шкулăн 1-мĕш «и» тата 59-мĕшсен 4-мĕш «я» класс ачисем, 3-мĕш вырăн вара 10-мĕш шкулăн 2-мĕш «и»пе 4-мĕш «и»пе 5 «и» класрисем тата 35-мĕш шкулăн 2-мĕш «л» класс ачисем йышăнчĕç.

Хулари çӳлерех палăртнă шкулсенчи чăваш чĕлхи учителĕсем ачасен тăван чĕлхене вĕренес-пĕлес туртăмне ӳстерме тата вĕсен ăсталăхĕпе пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ аталантарма тăрăшни питех те аван сисĕнет. Ачасене халăх йăли-йĕркипе паллаштарнă май тĕрĕс пурнăç йĕркине те хăнăхтарса пыраççĕ вĕсем. Учительсем уроксемпе класс тулашĕнчи ĕçсенче халăх ăслăлăхĕпе вырăнлă та пĕлсе усă кураççĕ, чăваш çыннин ырă енĕсене ачасен ăшне хываççĕ.

*Геронтий НИКИФОРОВ,*
*ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ.*

**СĂНӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** уяв саманчĕсем.



ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

# Асаттесен аслă çулĕ

Чăвашра паллă çын нумай пулнине эпĕ хаçат-журналта вуласа пĕлетĕп. Вĕсем тĕрлĕ енлĕ çитĕнӳ туса тăван халăхне чапа кăлараççĕ.

Эпĕ те чăваш йăхĕнчен. Манăн мăн асатте – Терентий Сергеевич Сергеев – 1911 çулта Вăрмар районĕнчи Карăк Çырма ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл мăн асаннене Шăхаль ялĕнчен илсе килнĕ. Мăн асатте Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче нимĕçсене хирĕç çапăçнă. 1942 çулта аманнă хыççăн яла таврăнса сакăрвун икĕ çула çитиччен совхозра кладовщик пулса ĕçленĕ. Мăн асанне – Анна Васильевна Сергеева – вăрçă çулĕсенче те, кайран та тракторист пулса ĕçленĕ.

Аннен кукамăшĕ те – Анна Васильевна Кириллова – чăваш хĕрĕ пулнă. Вăл та ватăличченех совхозра вăй хунă. Аттен кукашшĕ – Афанасий Петрович Петров – хастар чăваш çынни, вăрçăн малтанхи кунĕсенчех хĕрӳ çапăçура хыпарсăр çухалнă. Мăн кукамай – Иульяна Семеновна Петрова – тăхăрвун пĕр çула çитиччен пурăннă, ачисене пĕччененех ӳстернĕ, кайран мăнукĕсене те пăхнă. Вăл питĕ çирĕп чăваш хĕрарăмĕ пулнă. Вăрçă хыççăнхи выçлăх çулĕсенче тăванĕпе пĕрле Шупашкара çурран кайса çăнăх-кĕрпе туянма май тупса ачисене ура çине тăратнă. Çапла вĕсем, чăваш хĕрарăмĕсем, йывăрлăха та, хуйха-суйха та çирĕппĕн тӳссе ирттереççĕ, инкексинкекрен тухма та çул тупаççĕ.

Пирĕн тăвансенчен нумайăшĕ Шупашкарта тата республикăри тĕрлĕ ялта пурăнать. Пĕрле пухăнсан вĕсем тăван халăх юррисене шăрантарççĕ, чăвашла ташласа тĕлĕнтереççĕ.

Эпĕ хам чăваш пулнишĕн савăнатăп, мăнаçланатăп. Атте-анне пилленĕ чĕлхепе пĕр вăтанмасăр калаçатăп, йăмăкăма та хамăрăн кашни сăмахăн илемне туйма вĕрентетĕп.

***Данил ЕВСЕЕВ,***
***8 класс.***

# Несĕлсемпе мухтанатăп

Манăн кукаçи – Петр Иванович Иванов, кукамай вара – Нина Антоновна Иванова. Кукамай мĕн пĕчĕкренех ĕçре пиçĕхнĕ. Çемьере çичĕ ачаран чи асли пулнăран та йывăрлăхĕ ун çине ытларах тиеннĕ пуль. Вăл Вăрмар районне кĕрекен Шăхаль ялĕнче çуралнă, ача чухнех колхоза пулăшма çӳренĕ: уйра кăшман йăранĕсене çумкурăкран тасатнă, çĕрулми купаланă, утă пуçтарнă. «Кунĕпех хĕвел çинче ĕçлеттĕмĕр. Йăранĕсем питĕ вăрăмччĕ...» – асаилет кукамай. Ачалăхĕ çинчен калама чухне куçĕсем шывланаççĕ. Темĕн те чăтма тивнĕ çав вăхăтсенче.

Кукаçи вара Вăрмар районне кĕрекен Чулкас ялĕнче çуралса ӳснĕ, çемьери çичĕ ачаран чи кĕçĕнни пулнă. Ӳссе çитсен ăна колхозра бригадир тивĕçне пурнăçлама шанса панă.

«Килсенче хальхи пек электричество пулман, шкулта сивĕччĕ. Класра нумаййăн вĕренеттĕмĕр, пĕр парта хушшине пилĕкшерĕн лараттăмăр. Урок тума хăйă çутаттăмăр...» – каласа парать кукаçи.

Кукамайпа кукаçи пĕр-пĕрне юратса пĕрлешнĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн кукаçие Хисеп хучĕпе сахал мар чысланă. Ĕç ветеранĕ ята та тивĕçнĕ вăл. Кукамай вара çемье ăшшине упранă. Вĕсем пилĕк ача çуратса ӳстернĕ, пурне те аслă пĕлӳ панă. Ӳссе çитсен юратнă тĕпренчĕкĕсем кайăксем пекех вĕçсе тухса кайнă, пурте çемье çавăрнă. Паян вĕсен çичĕ мăнук. Кĕçех кукамайпа кукаçин ылтăн туй та çитет.

Халĕ вара кукаçи хурт-хăмăр ĕрчетет, кукамай чăлха-алсиш çыхать. Ĕçлеме хăнăхнă çынсем пĕрре те алă усса лараймаççĕ. Эпир час-часах вĕсем патĕнче пуçтарăнатпăр. Çывăх çыннăмăрсем çине пăхсан чун хĕпĕртет, чĕре савăнать. Кукаçипе кукамай пире яланах хавас кăмăлпа кĕтсе илеççĕ, анчах ăсатнă чухне чунĕсем хурланаççĕ, куççулĕ те тухать. Эпĕ вĕсене май пур таран пулăшатăп.

Манăн та кукамайпа кукаçи пекех ăслă та хастар пулас килет. Юратнă çыннăмсене ырă тĕслĕхшĕн тавах.

***Валентина ФЕДОРОВА,***
***8 класс.***

Вăрмар районĕ,
Чулкас шкулĕ.

# «Лаша – картиш илемĕ»



Вăрнарти 2-мĕш шкулăн 3-мĕш «а» класри Катя Сергеева чăваш чĕлхи урокне çав тери кăмăллать. Вĕсене паян юратнă вĕрентекенĕ Вероника Трифоновна Дмитриева чĕрчунсем çинчен кĕске калав çырма сĕнчĕ.

– Килти ĕçе лайăх пурнăçласа килĕр, – тесе ăшшăн калаçрĕ вăл.

Мĕн пирки çырассине нумайччен шухăшласа çӳрерĕ хĕрача.

– Кайăксене питĕ юрататăп, хĕллесерен сырăша апат та паратăп. Çерçисемпе кăсăясем тата уйăпсем еплерех хăналаннине пăхса тăма килĕштеретĕп. Тен, сочинени темине те вĕсемпех çыхăнтармалла, – тесе шухăшласа хапха алăкне уçса картише кĕрсе тăчĕ хайхискер.

Шăп çав вăхăтра картара тăракан лаши кĕçенсе ячĕ, шартах сикрĕ Катя. Ласка çине кăн! пăхнă май:

– Юратнă урхамахăм, эсĕ мана тарăн çырмаран тухма пулăшрăн та. Элĕ сан çинчен пĕчĕк заметка шăрçалăп. Тăрăшсах. Вĕрентекен кăмăлне тивĕçтермелле аван материал çырăп, – çупăрларĕ ачашшăн янаварне.

Каç енне килти ĕçсене пурнăçласа пĕтерсен сочинени çырма ларчĕ хĕрача.

«Эпĕ Упнер ялĕнче пурăнатăп. Пирĕн картише лаша илем кӳрет. Ăна юратса та ачашшăн Ласка тесе чĕнетпĕр. Вăл хăмăр тĕслĕ, çамки çинче сарăлса каякан шурă йĕр пур. Урисене хура «чăлха» тăхăннă. Хăмăр кусĕсем кирек кам çине те ăшшăн пăхаççĕ. Кӳлсен е утлансан вара çав тери хытă чупать.

Çулла вăл пире пур ĕçре те пулăшать. Утă турттарать, çĕрулми йăранĕсене темиçе хутчен те çырать. Ывăнсассăн эпĕ ăна тутлă кучченеçпе хăналама тăрăшатăп. Купăста, панулми, груша çиме çав тери кăмăллать. Шывне те вăхăтра ĕçтеретĕп.

Урхамахăм çав тери ăслă. Ун çине утланса уçăлса çӳреме ухута эпĕ. Вăл вара, ман шухăшăмпа, пĕрле таçта çитсе килме те пултарать», – тесе вĕçлерĕ те хайĕн çыру ĕçне темиçе хутчен вуласа тухрĕ.

Чăнах та, вĕрентекен унăн ĕçне лайăххисен шутне кĕртрĕ.

– Виççĕмĕш класс ачишĕн ку хайлав питех те ăнăçлă пулса тухнă. Катьăна малашне те çакăн пек пултаруллă пулма ырă сунатăп, – тесен, хĕрача çав тери хăпартланчĕ. Татах та татах... çырас та çырас килчĕ унăн.

Çак туртăм ахальтен пуçланман çав унăн. Нумай вулать вăл, çавна май тăтăш библиотекăна васкать. Тĕрлĕ калав-халаппа паллашнă май, писатель шăрçаланă хитре йĕркесене тетраде çырса хурать.

– Ах, манăн та çапла илемлĕ çырма вĕренесчĕ, – тесе чун-чĕререн хавхаланать.

Хĕрача математика предметне те çăмăллăнах парăнтарать.

– Пĕр-пĕр задача хуравне тупасси маншăн йывăр мар. Е тĕрлĕ примера шутласси – вăйă евĕр çеç. Самантрах тĕрĕс тупсăм патне çитетĕп. Ӳссен вара тухтăр пулас килет. Йывăр вăхăтра çынсене пулăшу парас ĕмĕт канăç памасть, – тет Катя Сергеева мăнаçлăн.

# «Çар çынни пуласчĕ»

Калининори 8-мĕш кадет класĕнче вĕренекен Иосиф Урмаков тăваттăмĕш чĕрĕке аван паллăсемпе вĕçлесе хăвăртрах амăшĕн тăванĕсем патне хăнана каясшăн.

– Аннен тăванĕ нумай. Çакăншăн питĕ савăнатăп. Каникулсенче тĕрлĕ тăрăха çитсе курни – телей! Уйрăмах Элĕк районĕнчи Иштек ялĕ хăй патне турттать мана. Урамĕсем çеç мар, пĕви те таса пулни савăнтарать. Мăнаккасем çулласерен 6 ĕне усраççĕ те ĕçĕ питĕ нумай. Мана çакă килĕшет те. Аслисемпе хĕлле валли утă-улăм хатĕрлеме, касăва кайма пĕрре те ӳркенместĕп. Ку вăл хăйне евĕр спорт çеç! Кĕтĕве савăнсах каятăп. Ирхи сывлăмлă курăкпа утма çав тери килĕшет. Уй-хир, вăрман, тавралăх этем сăнарĕ йышăнас пулсан мĕн тери илемлĕ, сатур та кăмăллă, ача пек таса чунлă та лайăх çын пулмалла ахăртнех... Анне пек... Чăнах та, юратнă тавралăх мар-и-ха çынсене сăнар параканни? Сĕткенне те вăл çак çĕртен-шывран, йывăçран, ӳсен-тăран çимĕçсенчен илет... Чунне те çакăнтанах илет: кайăк юррисенчен, шевле чӳхеннинчен, чечек тусанĕсенчен... Кашни кукăр, тӳпем, лапам, уй-улăх, ĕшне-ката темĕнле хăйне çеç тивĕçлĕ, ăна курсан çеç ыттисенчен уйрăм туйăм вăратать чун-чĕрере. Хăватлăн туйăнать çут тĕнче... Ултă кунта тĕрлĕ илеме курса савăнатăп çапла, тепĕр касу черечĕ çитиччен. Уйра тата апат та килтинчен тутлăрах! Касура 24 ĕне, вĕсенчен улттăшĕ мăнаккасен. Çапла вара уя тухмалли пирĕн черет питĕ хăвăрт саврăнса çитет. Ĕнесене çав тери юрататăп. Картише кĕрсен кашнине ачашлатăп. Çакă хайхисене питĕ килĕшет ахăртнех, ман хыççăн çӳреççĕ. Вĕсене епле юратмăн-ха? Кашни кун тутлă сĕтпе савăнтараççĕ вĕт! Ялта ĕçĕ нумай пулин те, пушă вăхăт тупса туссемпе чун каниччен футболла вылятпăр, – хăпартланать Вăрнар тăрăхĕн хастарĕ Иосиф.

Алгебрăпа геометри предмечĕсене кăмăллакан арçын ача çар çынни пуласшăн.

– Пирĕн шкултан вĕренсе тухнисенчен нумайăшĕ пурнăçне çарпа çыхăнтарнă. Манăн та вĕсенчен тĕслĕх илсе çĕршыва юрăхлă çын пуласчĕ. Тăван тăрăх ятне çӳлте тытас килет. Паян вара кадет класĕнче вĕреннишĕн хĕпĕртетĕп, – палăртать хăй шухăшне вăл.

Техникăпа та кăсăкланать сатур кадет. Трактор кабинине пĕрремĕш хут ларсан шиклĕх туйăмĕ те çуралнăччĕ унăн. Паян вара çăмăллăнах çĕр сухалама пултарать.





# «Чунăм ялаллах туртăнать»

Канашри 11-мĕш шкулăн 7-мĕш класĕнче вĕренекен Олег Иглов та ял пурнăçне килĕштерет. Канмалли кунсенче кукамăшĕпе кукашшĕ патне Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Ишпуçне васкать.

– Хулара çеç мар, ялта та тус-юлташ нумай манăн. Вĕсемпе тем тĕрлĕ вăйă вылятпăр. Хĕллесерен йĕлтĕрпе, çулласерен велосипедпа ăмăртатпăр. Ара, спортсăр пурăнма çав тери кичем-çке. Вăрман сывлăшне кăмăлланăранах кукаçипе милĕк хуçма çӳретпĕр çулласерен. Аннепе кăмпа-çырла пухма та хатĕр эпĕ. Тантăшсемпе пулăра ларасси – телей! Тата та кăмăллăраххи – вăлтана пулă хыççăн пулă çаклanни! Ĕç ăнасси те çанталăкран килет. Çил çурçĕртен е хĕвелтухăçĕнчен пулсан пулă пирки ан та ĕмĕтлен. Хĕвеланăç енчен тӳлек кăна çил шыв çийĕн палăри-палăрми шăрçа пек хумсем кустара пуçласан – шăп та шай пулăçсен ĕмĕтĕнче сĕмленекен кун вара. Е тата кашни хулкка хăйне майлă. Пĕри чĕкеç пек çăмăллăн вылять, тепри лӳппер, виççĕмĕшĕ наян... Ун çине пăхас та килмест. Чунлă япала пек вăл хулкка. Анчах ăна пулă туртсан çеç хăйне евĕр чун кĕрет. Çавăн чухне тинех вăл илемĕпе йăлтăртатма тытăнать, – ăнлантарать Олег.

Кроликсене пăхма та кăмăллать арçын ача. Çулласерен вĕсем валли курăк пуçтарса михĕпе çĕклет, кишĕрпе тата купăстапа сăйлама та манмасть юратнă тусĕсене. Паян та вĕсемшĕн тунсăхланипе яла васкать вăл.

Юлашки чĕрĕке аван паллăсемпе вĕçлесшĕн Олег. Киле парса янă ĕçсене пурнăçласанах алла кĕнеке тытать. Малараx вара Константин Васильевич Иванов çырнă «Нарспи» поэмăна та юратса вуланăччĕ.

– Асăннă поэма питĕ килĕшрĕ. Чăваш писателĕсен хайлавĕсемпе татах та паллашас кăмăл пур-ха, – тет хастар арçын ача пĕтĕм чун хавалĕпе.

# Ача пăхакан

### Калав

Нинука амăшĕ ирех вăратрĕ. «Хĕрĕм, тăр-ха, санăн ача пăхма каймалла», – терĕ. Çичĕ çулти хĕрачана Верук аппа çур кунлăха ача пăхма чĕннĕ.

Пÿрте кĕрсенех тутлă купăста яшки шăрши Нинук сăмсине кăтăкларĕ. Верук аппа кăмака плити çине кăтартса хĕрачана ăнлантарма тытăнчĕ: «Ак кунта вĕри яшка, тепĕр кастрюльте – Сашук валли пăтă тата сĕт».

Хĕрача пÿлĕмре каллĕ-маллĕ уткаларĕ. Чаршава сирсе пăхсан Сашук сывăрнине асăрхарĕ. «Типĕ йĕмсем кунта, акă ĕмкĕч», – терĕ Верук аппа алăк патне васкаса.

Нинук кунта пĕрремĕш хут килсе курнăран пĕтĕмпех кăсăкланчĕ. Вăл сĕтел ешчĕкне уçса тĕрĕслерĕ, унтан канфет кăларса çăварне хыпрĕ. Çав вăхăтра стена çинчи сехет шавласа кайрĕ: «Ку-ку!» Нинук ача ан вăрантăр тесе сехет патне васкарĕ, пукан çине хăпарса тăчĕ те кайăка пусĕнчен ярса тытрĕ, каялла кĕме памарĕ. Аптăранă кайăк пусне усрĕ. «Ак тамаша. Сехет пăсăлчĕ пулмалла», – шикленсе ÿкрĕ хĕрача.

Вăрансан Сашук тÿрех амăшне чĕнчĕ. Нинук çухалса каймарĕ, ачана ĕмкĕч хыптарчĕ. Мăнтăркка Сашука вăл кравать çинчен аран-аран туртса антарчĕ. Çирĕппĕн утайманскере çавăтса çÿремелле-ха тата.

«Пăтă çиетпĕр ак», – терĕ ача пăхакан. Пĕчĕкскере сак çине лартса теттесем хурса пачĕ. Хăй вара чашăка пăтă тултарчĕ те ачана çитерме хăтланчĕ. Сашук теттипе сулкалашса кашăкри пăтта тăкса ячĕ. Темĕнле ÿкĕтлесен те ăна çитерме май килмерĕ. «Упăте. Мĕнле тутлă пăтта çиме пĕлместĕн», – терĕ те Нинук пăтта хăй çисе ячĕ. Кĕленчери ăшă сĕте Сашук мăшлатсах ĕçсе ячĕ.

Нинук ачана кавир çине лартрĕ, теттесем купаласа пачĕ. Хăй вара пукан çине хăпарса тăчĕ те çÿлĕк çинче мĕн пуррине тĕрĕслеме тытăнчĕ. «Ку тата мĕн?» – тесе одеколон кĕленчине тытрĕ. «Шипр» сăмаха аран-аран вуларĕ. Пăккине уçса çур кĕленчине хăйĕн кĕпи çине тăкрĕ. Пукан çинчен хыттăн сиксе аннипе ача шарт сикрĕ, кайран ахăлтатса кулса ячĕ. Одеколон шăрши ача сăмсине кăтăкларĕ, апчхулаттарчĕ. Кăмака çинче выртакан кушакка та шăршă килĕшмерĕ пулас, мĕскĕнскер мяуклатса алăк патне вирхĕнчĕ. Нинук ăна алăк уçса пÿртрен кăларчĕ.

Верук аппа таврăнсан одеколонпа кам хуçаланнине тÿрех ăнланчĕ, анчах ним те каламарĕ. «Ача пăтă çирĕ-и?» – тесе кăсăкланчĕ. Хĕрача: «Аха», – терĕ. Канфетлă тата пĕремĕклĕ пулнăскер савăнăçлăн килнелле вĕçтерчĕ. Ун хыççăн урамра тутлă шăршă кăна сарăлса юлчĕ.

**Галина ПЕТРОВА.**



© *Кристина* **ВАСИЛЬЕВА** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ÿкерчĕкĕ.*

# Пĕр ăс аван, иккĕ тата аванрах



«Пĕр ăс аван, иккĕ тата аванрах», – тенĕ ĕлĕк ваттисем. Ахăртнех ку каларăш йĕкĕрешсене те пырса тивет. Вĕсем яланах пĕр-пĕрне пулăшса пыраççĕ-çке.

Йĕкĕрешсем пĕр-пĕринчен нумайлăха уйрăлма та пултараймаççĕ тет. Википедие ĕненсен вĕсем сăн-питпе, тавракурăмпа кăна мар, хăйсен тыткаларăшĕпе те, кăмăл-сипетпе те пĕр пекрех иккен. Аслă Куснар шкулне çитсе курсассăн кăна çак сăмахсен чăнлăхне ĕнентĕм. Улттăмĕш класри Маринăпа Ирина Тебаковăсем пĕр класра ăс пухаççĕ, пĕр парта хушшинче лараççĕ. Йĕкĕрешсем пĕр пек япаласемпех кăсăкланаççĕ. Иккĕшĕ те ÿкерме, ташлама юрататççĕ. Кирек мĕнле ĕçе те яланах хавасланса пурнăçлаççĕ. Шкула вара вĕсем кÿршĕ яла çÿреççĕ. Пĕлÿ çуртне мĕнлерех кăмăл-туйăмпа утаççĕ-ши хĕрсем? Ыйтса пĕлер-ха.

Йĕкĕрешсем вулакансене хăйсемпе кăштах паллаштарма кăмăл турĕç.

– Хĕрсем, сире шкула ют ялтан çÿреме йывăр мар-и? – ыйтрăм Маринăпа Иринăран.

– Халь тин çук ĕнтĕ. Шкула пурпĕрех çитмелле-çке. Эпир тахçанах хăнăхса çитрĕмĕр.

– Шкула кайма миçере тăратăр? Автобуса ĕлкĕретĕр-и?

– Хăш-пĕр чухне çывăрас та килет. Анчах çичĕ сехет çурă валли ял вĕçне ятарлă транспорт кĕтме тухса тăмалла, унсăрăн шкула çитейместпĕр. Ялтан пурĕ вăтăр виççĕн çÿретпĕр.

– Хăçантанпа çапла çитетĕр?

– Хамăр ялти шкула хупнă чух тăваттăмĕш класра вĕренеттĕмĕр. Анчах ун пирки питех кулянмастпăр. Çĕнĕ шкулта лайăхрах та тесе шухăшлатпăр.

– Ытларах мĕнле предметсем килĕшеççĕ?

– Вырăс чĕлхи, ÿнер... Математикăна вара уйрăмах кăмăллатпăр.

– Тавтапуç. Сире малашне те ăнăçу сунатăп.

**Иван ДЕРЮЖИН.**

Куславкка районĕ,
Аслă Куснар.

# «Пирĕн пулăшаканăм»



«Лаша пуласси тихаран, çын пуласси ачаран паллă», – тенĕ ваттисем. Çакна шăпах иккĕмĕш «б» класри вĕренÿ отличникĕ Тимофей Федоров çинчен каланăнах туйăнать. Шкула хаваспах çÿрет. Хамăр патра тата районта иртекен тĕрлĕ конкурса, викторинăна, олимпиадăна хутшăнса малти вырăнсем йышăнать. Çутă та пысăк ĕмĕтлĕскер шкулти «Кĕрхи фантази», «Çĕнĕ çулхи ĕмĕтсем», «Мы и дорога» ÿкерчĕксен конкурсĕсенче тата «Любителям словесности» викторинăра та 1-мĕш вырăна тухнă.

Çавăн пекех Интернет мелĕпе ирттернĕ олимпиадăсенче те палăрать. Математикăпа 3-мĕш степеньлĕ Диплома та тивĕçнĕ.

Тимофейăн амăшĕпе ашшĕ, Татьяна Михайловнăпа Игорь Вячеславович, арçын ачана тивĕçлĕ воспитани парса ÿстереççĕ. Вăл туслă çемьере çитĕнет. Иккĕмĕш класра вĕренекенскер ашшĕпе амăшне пулăшма яланах вăхăт тупать. Кеша ятлă попугая юратса пăхать. Хуçалăхра усракан кроликсене те апатлантарать, тислĕкне тасатать. Кил-çуртра амăшне тĕрлĕ ĕçре пулăшать. Унăн чи юратнă апачĕ – амăшĕ пĕçернĕ икерчĕ. Тепĕр чухне хăй те пĕрле çимĕçе ăшалама хутшăнать.

Тимофей техникăпа кăсăкланать. Çуллахи вăхăтра ашшĕпе пĕрле мотоблокпа утă пуçтарнă çĕрте тăрăшать. Ашшĕ ăна «манăн пулăшаканăм» тесе мухтать.

Пушă вăхăтра мультфильмсем курма, компьютерпа вăйăсем выляма, кĕнеке вулама юрататъ маттурскер. Шăллĕпе, Сашăпа, выляса йăпанма та вăхăт тупать.

Тимофей ĕçчен те анлă тавракурăмлă çын пулса çитĕнесшĕн.

**М.КОНДРАТЬЕВА.**

Комсомольски районĕ,
Комсомольскинчи 2-мĕш шкул.

# Хаваслă 2015 самант





## Сăмахкаçмăшсем

**Сылтăмалла:** 1. Çурт кӳлепи. 5. Çĕвĕçĕн ĕç хатĕрĕ. 8. Попугай. 9. Вăл Байкалтан юхса тухать. 11. Турцин тĕп хули. 13. Пулас пӳртĕн планĕ. 14. Типсе кайнă абрикос. 15. Тинĕс офицерĕн хĕç-пăшалĕ. 16. Яппунсен сăвă виçи. 19. Кăнтăрти хула-курорт. 21. Слона итлеттермелли хатĕр. 23. Кăнтăрти кукăль. 25. Ӳнерçĕн ĕçĕ. 26. Чăваш ăсчахĕ. 27. Кĕпер пайĕ. 30. Чăваш çыравçи. 32. ... Бульба. 33. Вырăс сăвăçи, «Лесоповал» ушкăнăн ертӳçи. 34. Шахмат фигури. 36. Хаклă йышши чулсен виçи. 39. Ази мар. 40. Хура тинĕс хĕрринчи хула. 41. АПШăн уçлăха вĕçнĕ карапĕ. 42. Узбекистанри хула. 44. Кĕвĕ терминĕ. 46. Авалхи грексен пухăвĕ. 47. Унпа атă-пушмак тасатаççĕ. 48. Грексен тумĕ.

**Аялалла:** 1. Çурăм хыçĕнчи «хутаç». 2. Унта боксерсем тупăшаççĕ. 3. Пушă. 4. Хурткăпшанкă. 5. Туристсен «хваттерĕ». 6. Çӳç якатмалли хатĕр. 7. Испани ӳнерçи. 10. Тинĕс хĕрринчи вырăн. 12. Чире пула хупса хуни. 17. Хими элеменчĕ. 18. Çырма-çатраллă вырăнта чупни. 20. Чăваш спортсменки, хăвăрт утакан. 22. Атăл тăрăхĕнчи хула. 23. Вăхăт системекен. 24. Карттăсен пуххи. 28. Сайгак, джейран, ... 29. Çĕпĕр вăрманĕ. 30. Тир. 31. Авалхи хĕç-пăшал. 22. Кĕвĕ инструменчĕ. 35. Кăнтăр Америкăри юхашыв. 36. Пушхир кушакĕ. 37. Н.Гоголь хайлавĕ. 38. Чăваш юрăçи. 43. Чăваш çыравçи. 45. Ăмăрту комиссийĕ.

## Йĕппи хыççăн çиппи



1. Пысăк çырла. 2. Така мар. 3. Йывăç. 4. Вĕшле йытă. 5. Вĕçенкайăк. 6. Шакла пуç. 7. Пулă тытмалли хатĕр. 8. Пӳрт пайĕ. 9. Вăл сана хӳтĕлет. 10. Хитре. 11. Çум-курăк. 12. Укçа. 13. Сурăх мар. 14. ... кĕперĕ. 15. Урапа. 16. Çар çынни. 17. Кавказри юханшыв. 18. Куславкка районĕнчи ял. 19. Пысăк хутаç. 20. Енисей юппи. 21. Çар. 22. Евпатори çĕршыв. 23. Хĕн-хур. 24. Савăнăç палли. 25. Кĕвĕçӳ. 26. Кĕрпе. 27. Çыравçă – В.Краснов-... 28. Иран кӳрши. 29. Чăваш халăх писателĕ. 30. Республикăри район. 31. Вĕçев хатĕрĕ. 32. Бурят хресченĕ. 33. Фольклор жанрĕ. 34. Пулă. 35. Вăрман «патши». 36. Хими элеменчĕ. 37. Йывăç пайĕ. 38. Пулас лаша. 39. Ĕне апачĕ. 40. Чĕрчун. 41. Маугли «амăшĕ». 42. Нуша. 43. Вĕренӳ сĕтелĕ. 44. Кĕвĕ инструменчĕ. 45. Чăваш кăйкăрĕ – космонавт. 46. Пулăçăн хатĕрĕ. 47. Панулми сорчĕ. 48. Йывăç тĕпĕ. 49. Ун тĕп хули – Кабул. 50. «Ветер с моря дул» юрăна шăрантаракан. 51. Тыткăн мар. 52. Нимĕç философĕ. 53. Реферат ĕçĕ. 54. Çар техники. 55. Вырăс халăх ташши.

**Сылтăмалла:** 1. А.Артемьев çыравçăн «савнă хĕрĕ». 4. Чăваш композиторĕ. 9. Çăткăн пулă. 10. Авалхи скифсен хĕçĕ. 11. Сутуçăн «юлташĕ». 12. Ыйхăри кино. 13. Кавказри юханшыв. 14. Антилопа тĕсĕ. 15. Пахча-çимĕç. 16. Кăнтăрти хула. 18. Кĕвĕ янравлăхĕ. 20. Кавирпа пуян çĕршыв. 22. Вĕренӳ пӳлĕмĕ. 25. Ун çинче «Аврора» ларать. 27. Чăваш сăвăçи. 28. Уçлăха вĕçмелли хатĕр. 29. Нимĕç философĕ. 30. Кино-спектакле йыхравлакан. 32. Арçын ячĕ. 34. Кит тĕсĕ. 36. ...–Бодунов-Лебедев. 37. Çĕпĕре парăнтарнă атаман. 38. Чăваш халăх писателĕ. 40. Общежити «хуралçи». 42. Шыв хĕрринчи тĕмĕ. 43. Казаксен пуçлăхĕ. 44. Укçа. 45. Шыври чĕрчун. 46. Антарктида мар. 47. Чилири пушхир.

**Аялалла:** 1. Амати, Гварнери, ... 2. Япала туянма вăхăтлăха пулăшни. 3. Теори мар. 5. Вырăс артистки. 6. Упăте тĕсĕ. 7. Калта евĕр чĕрчун. 8. Республикăри район. 17. Вырăс актерĕ ...-Черный. 19. Телеертӳçĕ – Тина ... 21. Тапса туртакан такси. 23. Аслă çулпуçăмăр. 24. Аманнă вырăн. 26. В.Высоцкий мăшăрĕ, «Шерше ля фам». 29. Мурманск тăрăхĕнчи хула. 31. Тăвата çулта пĕрре иртекен ăмăрту. 33. Тапăннине сирсе яни. 35. Ют çĕршыв ăсчахĕ, натуралист. 36. Тинĕс тĕпне тĕпчекен. 39. Куславкка районĕнчи ял. 41. Албани тĕп хули.

### Тавçăр

Мансăр кăмака тăваймăн,
Сарăлса выртать уйра.
Пĕрлештертĕн-тĕк пулатăп,
Вĕçенкайăк самантрах.
* * *
Цехра тавар эп турттаратăп,
Ăста вĕçевçĕ тӳпере.
Иксĕмĕре пĕрле çырас-тăк,
Эпир ишетпĕр кӳлĕре.
* * *
Эпĕ шăтнă чăмлама,
Кавказ халăхĕ пулатăп.
Мана юрать тăхăнма,
Ик сăмах хушан-тăк.
* * *
Эп теме те шăтаратăп,
Вăл вара чĕрне сăрлать.
Тупсăмне сире калатăп,
Баржа Атăлта туртать.
* * *
Йăх тăсăмне пĕлтеретĕп,
Хускану эп ташăра.
Халь ăнкартăр пулĕ тетĕп,
Мĕн пĕлтерĕш ман çумра.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.**

ТĔЛПУЛУ

# Ăста çуралать-ха кĕнеке?



**Ача-пăча кĕнекин эрнине халалласа иртнĕ эрнере Шупашкарти Л.Кассиль ячĕллĕ вулавăшра «Ăста çуралать-ха кĕнеке?» ятпа хăйне евĕрлĕ мероприяти йĕркелерĕç кунти ĕçченсем. Тĕп хуламăрти 43-мĕш шкулти виççĕмĕш класс вĕренекенĕсем Чăваш кĕнеке издательствин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма пултарчĕç.**

Библиотекарьсем каласа панине çăвар карсах итлерĕç арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем. Чăваш кĕнеке издательстви предприяти кăна мар, вăл – кĕнеке килĕ те. Кунта çĕнĕ кăларăмсем кун çути кураççĕ. Вĕсем республикăмăрти шкулсемпе библиотекăсене, кĕнеке лавккисене туххăмрах çитеççĕ. Кунсăр пуçне çĕршывăмăрăн тĕрлĕ кĕтесне те саланаççĕ. Çапла майпа «ăс-тăн çимĕçĕсем» учительсемпе ачасене те, ашшĕ-амăшне те савăнăç кӳреççĕ. Паха кĕнеке вара çывăх юлташ пулса тăрать. Ăна вуласа тухсассăн та айккине пăрахса ямастăн, çӳлĕк çине хурса ун пирки манмастăн. Пачах тепĕр май, тăтăшах уçкаласа пăхатăн. Тĕлĕнмелле-тĕр, анчах кашнинчех хăвна валли мĕн те пулин çĕннине, унччен асăрхаманнине, тупатăн.

Кĕнеке пирĕн алла лекиччен мĕнлерех тапхăрсем витĕр тухать-ха? Сĕтел çинчи çăкăрăнни пекех вăрăм иккен унăн çулйĕрĕ. Тар тăкмасăр, йывăрлăхсене парăнтармасăр нимĕн те пулмасть. Япăххи кăна хăй тĕллĕнех шăтса тухать, вăй илет. Ырришĕн вара самаях тертленме тивет. Издательствăна çитнĕ алçырупа паллашнинчен пуçланать кĕнеке кăларасси. Текста вуласа якатаççĕ, пулас кăларăма калăплаççĕ, пичете яма хатĕрлеççĕ, кайран çĕлеççĕ... Ку ĕçре пысăк йыш тăрăшать: литература, ӳнер, техника редакторĕсем, калăплавçăсем, художниксем, фотографсем, типографи ĕçченĕсем...

Мероприятире библиотекарьсем каласа панисĕр пуçне ятарлă презентаци те кăтартрĕç. Пуян историллĕ издательство (кăçал 95 çулхи юбилейне паллă тăвĕ) ĕçĕ-хĕлĕпе туллинрех паллашма пулăшрĕ вăл. Çамрăк вулавçăсем валли «Чăваш кĕнеке издательстви – ачасене» ятпа пĕчĕк курав та йĕркеленĕччĕ. Кунта виççĕмĕш классем кĕнекесене уçса пăхма, ӳкерчĕксене пахалама пултарчĕç.

Çак кунах Шупашкарти 43-мĕш шкулти вуннăмĕш класс вĕренекенĕсем Чăваш кĕнеке издательствин PR-специалисчĕпе Надежда Осиповăпа тĕл пулчĕç, тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе яврĕç. 2015 çул предприятишĕн юбилейлă кăна мар, уйрăмах яваплă та. Ара, çĕршывăмăрта Литература, Чăваш енре Константин Иванов çулталăкĕсем-çке-ха. Кунсăр пуçне совет салтакĕсем ылханлă тăшмансене çапса аркатнăранпа 70 çул çитнине паллă тăватпăр кăçал. Çавна май издательство ĕçченĕсем те хăйсен умне çирĕп тĕллевсем лартнă. Вулакана паха литературăпа тивĕçтересси, паянхи вулавçă кăмăлне шута хурса ĕçлесси, самана таппипе тан пырасси тĕп вырăнта. Лайăх кĕнеке вара хăйĕн вулаканне тупатех.

Паянхи кун тĕлне Чăваш кĕнеке издательстви – тĕрлĕ енлĕ литература кăларакан предприяти. Повесть-роман вулама юратакансем те, поэзие парăннисем те, ăслăлăх хутлăхĕнче тĕпчевсем иртерекенсем те, пĕлӳ тĕнчине пĕрремĕш утăмсем тăвакансем те, тăван ен историйĕпе кăсăкланакансем те, чĕлхене вĕренес текенсем те – кашниех хăйне валли кирлĕ кĕнеке тупма пултарать. Издательствăн «Книжные новинки» лавккисем пурри те ку ĕçе çăмăллатать.

Надежда Андреевна вĕренекенсене паллăрах кăларăмсемпе паллаштарчĕ, ятарлă серисем çинчен каласа пачĕ, çавăн пекех «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурса хутшăнма йыхравларĕ. Хаклă тантăшăмăрсем, сире те аса илтеретпĕр. Пултарулăх ăмăртăвĕ пилĕк номинаципе иртет: «Интереслĕ кĕнеке» темăпа çырнă чи лайăх сочинени е калав; «Манăн юратнă сăнар» темăпа тунă чи лайăх ӳкерчĕк; «Вулама сĕнетĕп!» темăпа хатĕрленĕ чи лайăх плакат, буклет, листовка, открытка е календарь (вулавăн пĕтĕмĕшле е кăмăла кайнă кĕнекен реклами); «Ача аллипе хатĕрленĕ кĕнеке» – вĕренекен хăй çырнă сăвви-калавĕнчен е заметки-очеркĕнчен тăракан алăпа ăсталанă кĕнеке; «Кĕнеке – пирĕн çемьен чи лайăх тусĕ» темăпа çырнă чи лайăх эссе – кĕнекен этем тата çемье пурнăçĕнчи вырăнĕ пирки. Ĕçсене 2015 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшченех йышăнаççĕ. Эппин, шухăшламалăх, ӳкермелĕх-çырмалăх вăхăт пур. Çапах та ĕçĕрсене вăраха ямасăр пурнăçлăр. Кая юлсан каю шăтать тесе ахальтен каламан ваттисем.

ШУХĂШ

✓Хăш-пĕр поэтсен пуçĕнчи улăм Çилçуната питĕ килĕшет пулас.

***Станислав Ежи Лец***

✓Поэтсене пурте мухтаççĕ, анчах журналсем çеç тăрантараççĕ...

***Александр Пушкин***

✓ Пĕр турра çеç – илемлĕ калана, харсăр тĕрĕслĕх сăмахне – пуççапакан поэтсене мухтар.

***Максим Горький***

✓Чăн-чăн поэт ялан пророк.

***Пьер Леру***

✓ Поэт пĕтĕм этемлĕх опытне ăша хывсах çуралать.

***Изольда Курц***

✓Поэзи – тавралăха ăнланмалли хăйне евĕрлĕ мел, материе аллакан, ăна улăштармасăр çĕнетекен ятарлă орган.

***Гюстав Флобер***

✓ Чун уçăмлăхĕпе çырнă сăвăсем – чи ăнăçлисем.

***Публий Овидий Назон***

✓Поэзи вĕçĕмсĕр çĕнĕлĕх ыйтать, тепĕр хут каланинчен хăрушăраххи нимĕн те çук уншăн.

***Афанасий Фет***

✓Поэзи – ӳнер пекех: хăш-пĕр произведени çывăхран сăнасан тыткăнлать, тепри – аякран хак парсан.

***Гораций***

✓Сăвă çырма пултаракан кашни çынах – поэт мар.

***Джонсон Б.***

✓Поэзи çăлкуçĕ – илем.

***Николай Гоголь***

УЯВ

# Поэзисĕр пурнăç тĕссĕр те кичем...




Поэзисĕр пурнăç тĕссĕр те кичем... Тен, ку шухăшпа хăшĕ-пĕри килĕшмĕ, çапах та ун тĕрĕслĕхĕнче иккĕленме кирлĕ мар. Ача чухне аслисенчен те, юлташсенчен те вăрттăн кашниех сăвă çыркаланă ахăртнех. Тен, ăна кама-тăр халалланă, анчах кăтартма шикленнĕ. Халĕ пĕр ыйтăва хуравлама сĕнетĕп: мĕн хистенĕ-ха çав самантра алла ручка тытма? Тӳрех хурав пама йывăртарах пек-и? Эппин, кăштах пулăшам. Туйăмсем тулса тăкăннипе, чуна шăнăçайми пулнипе сăрхăнса тухман-ши пирвайхи черченкĕ те айван йĕркесем? Хамăра ăнланма тăрăшнипе çуралман-ши вĕсем?

Çулсем иртнĕçем чылайăшĕ поэзирен писет. Мĕншĕнха? Каллех кăткăс ыйту. Ачан таса чунĕ поэзин асамлă чĕлхине çăмăллăнах йышăнать. Сасăсен вылявĕ те интереслĕ уншăн. Çитĕннĕçем вара этем темшĕн сăвă кĕнекисене айккине сирсе хăварать. «Ăнланмастăп эп вăл поэтсене. Тем пăтранаççĕ, пĕр уçăмлăх çук. Тем каласшăн...» – тесе тӳрре тухма пăхаççĕ унашкаллисем. Хăйсене мар, сăвăçсенех айăплаççĕ. Куншăн çилленмелле мар вĕсене, мĕншĕн тесен тĕрĕссине пĕлтереççĕ. Чăннипех те ăнланмаççĕ вĕт-ха. Хытнă чун сисĕмлĕхĕ чакнă, лирика сăнарĕсем пирки пуç ватса ларма вара вăхăт çук.

Ӳт-пӳ, кĕлетке хăтлăхĕшĕн питех хыпăнатпăр-ха эпир: апат-çимĕçĕ те ытлă-çитлĕ, çи-пуçĕ те чаплă. Чун апачĕ çинчен вара темшĕн манатпăр. Поэзи – чĕрĕлĕх çăлкуçĕ, унсăр типетпĕр, туйăмлăха çухататпăр. Этемлĕхе çакăн пирки аса илтерес тĕллевпех 1999 çулта ЮНЕСКО тĕп ассамблейин 30-мĕш сессийĕнче йышăну тунă: çулсеренех мартăн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери поэзи кунне паллă тумалла. Хăш-пĕр çĕршывра ăна октябрĕн 15-мĕшĕнче, Авалхи Рим поэчĕ Вергилий çуралнă кун, уявлаççĕ. Ку йăла АПШра тымарланнă та ытти çĕршывсене те сарăлнă.

Поэзи кунĕнче литература каçĕсем, сăвă вулавĕсем ирттереççĕ. Поэтсем вулакансемпе тĕлпулусем йĕркелеççĕ. Хăш-пĕр издательство çамрăк авторсен сăвă пуххисене кăларас енĕпе те тимлет.

Çапла, поэзи кунĕ хыçа юлчĕ. Апла пулин те пушă вăхăт тупса поэтсен хайлавĕсемпе паллашасчĕ. Тен, шăпах хăвăра канăçсăрлантаракан ыйту хуравне вĕсенчен пĕринче тупăр...

# Асамлăх тĕнчи

***Пĕтĕм тĕнчери пуканеçĕсен кунне 2003 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче пĕрремĕш хут уявланă.***

# "Юратнă ĕçĕмпе савăнатăп...»



Пирĕн театр ĕçченĕсемшĕн те вăл кĕтнĕ кун. Кăçалхи уявра куракансене "Принцесса и Свинопас"(Г.-Х.Андерсен юмахне тĕпе хурса çырнă) спектакльпе савăнтартăмăр.

Пуканеçĕ тесе эпир пукане вăййи кăтартакан çынна тата Пукане театрĕн артисчĕ пулса ĕçлекене калатпăр. Пукане ăсталакан маçтăр (ăста) та – пуканеçĕ.

Чăваш патшалăх пукане театрĕнче халĕ алла яхăн çын ĕçлет. Вĕсенчен 18-шĕ – пуканеçĕ. Пирĕн театрта пултаруллă артист сахал мар. Унччен те çапла пулнă, халĕ те. Манăн сире, хисеплĕ вулаканăм, вĕсенчен пĕринпе – çултан çул сцена çинче хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтаракан Ольга Тарасова артисткăпа паллаштарас килет.

## Оля-пукане

Етĕрне тăрăхĕнче пултаруллă çын сахал мар çуралса ӳснĕ. Шăпах çав таврари Кĕçĕн Ямаш ялĕнче, Алексей Романовичпа Эльвира Михайловна Зубковсен килйышĕнче кун çути курнă Оля. Ун чухне 3-4 çулсенче кăна пулнă-ха вăл. Унран кам та пулин вăл мĕн ятлине пĕлес тесен, хĕр пĕрчи тӳрех: "Оля-пукане!" – тесе хуравланă. Çак çемьере пилĕк хĕрача çитĕннĕ: Оксана, Марина, Надя, Ольга тата Алина. Халĕ вĕсем тĕрлĕ ĕçре тăрăшаççĕ. Ольăпа Надя вара театр искусствинче. Надежда Зубкова артистка ятне кам пĕлмест-ши? Вăл К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн репертуарĕнчи чылай спектакльте тĕп сăнарсене выляканĕ.

Ольга та мĕн пĕчĕкрен юрра-ташша ăста пулнă. Кашни уяв валли хатĕрлекен концерта хутшăннă. Спектакль сыпăкĕсенче те вылянă. Саккăрмĕш класран пуçласа Çĕнĕ çул уявне яланах Юрпике пулса хутшăннă. Клубри драма кружокне çӳренĕ. Унта РФ тата Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Дмитриевич Кудаков çырнă "Çĕмĕрт шап-шурă çеçкере" музыкăллă камитре тĕп сăнара Светăна вылянă.

## Пĕлӳ тĕнчинче

Мăн Пакăш шкулĕнче Ольга Зубкова тăхăр класс вĕреннĕ. Унтан Кивĕ Тинкешре ăс пухнă. Пур предметпа та лайăх ĕлкĕрсе пынă. Уйрăмах вырăс чĕлхипе литературине юратнă. Алевтина Сергеевна Жидкова учитель питех те килĕшнĕ Ольăна. Çавăнпа хĕрача малтанах хăй умне вĕрентекен пулма тĕллев лартнă. Анчах Надя аппăшĕ Мускаври М.С.Щепкин ячĕллĕ аслă пĕлӳпе тивĕçтерекен Театр училищине вĕренме кĕрсен, Ольăн та ĕмĕчĕ улшăннă. Ăна та сцена ачарах тыткăнланă-çке-ха!

2000-2004 çулсенче Ольга Зубкова Чăваш Республикинчи культура училищинче вĕреннĕ. Кунта вăл режиссер профессине алла илнĕ. Педагогсенчен режиссурăпа вĕрентнĕ Евгений Николаевич Лукина халĕ ырăпа аса илет вăл. Раиса Михайловна Туменко (грим), Галина Васильевна Семенова (сценари çырасси) урокĕсем те унăн асĕнчех. Училищĕре иртнĕ тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăннă, яланах уяв программине ертсе пыраканĕ пулнă. Унăн асĕнче " Красная Шапочка" юмахра хăй вылянă Амăшĕн сăнарĕ те. Училищĕрен Ольга Зубкова хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă.

## Алран пукане каймасть

– Эпĕ 8-мĕш класченех пуканелле вылянă. Шкулта та, тăхтав вăхăтĕнче ăна алран ямастăм, – аса илет Ольга Алексеевна, – Шупашкара киличчен Чăваш пукане театрĕ пирки пĕлмен. Училищĕре чухне пире унта экскурсие илсе кайрĕç. Анчах унта мĕн курни нимĕн те ман асра юлман...

Ун чухне вăл çак театрта артистка пулса ĕçлесси пирки тĕлленмен те. Анчах шăпа çырнинчен иртме çук иккен. Пĕрре, республика шайĕнче иртекен концерта, унпа пĕрле программăна ертсе пыраканĕ Пукане театрĕн илемлĕх ертӳçи, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Юрий Михайлович Филиппов пултаруллă хĕре тӳрех асăрхать, пĕрле ĕçлеме чĕнет. Çапла вара, 2004 çултан Ольга Зубкова (качча кайсан – Тарасова) Чăваш патшалăх пукане театрĕн артистки. Çав çулхинех вăл Хусанти культурăпа искусство университечĕн режиссура уйрăмне куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ.

– Манăн Юрий Михайловича тав тăвас килет çак театра илсе килнĕшĕн, – тет Ольга Алексеевна. – Паллах, хăнăхиччен Пукане театрĕнче ĕçлеме питĕ йывăр. Тата аслă çулсенчи артистсене тав тăвас килет. Уйрăмах, ЧР тава тивĕçлĕ артистки Зоя Петровна Зорина нумай пулăшрĕ. Пукане выляттарас енĕпе вăл чăн-чăн ăста. Асамçă! Ăна çитекенĕ питĕ сайра... Малтанхи вăхăтра манран кам та пулин ыйтсан: «Ну, мĕнле унта, Пукане театрĕнче ĕçлеме килĕшет-и?» – тесен, килĕшмесен те: «Килĕшет», – теттĕм. Чăннипе вара, пĕр пилĕк çул иртсен тин, пуканене выляттарасси килĕшме пуçларĕ. Малтанхи çулсенче, çав тери хăйне евĕрлĕ пуканеçĕпе – Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткипе Юлия Ивановна Ивановăпа та ĕçлесе куртăм... Пукане театрĕсене илес пулсан – Мускаври С.В.Образцов ячĕллĕ Тĕп академи пукане театрĕн спектаклĕсем килĕшеççĕ.

## Артисткăн юратнă сăнарĕсем

Пукане театрĕнчи Ольга Тарасова артистка вылянă пĕрремĕш роль – Патша арăмĕ ("Царевна-Лягушка" пьеса-юмах). Ку сăнар çамрăк мар, хăйне тивĕçлĕ тытма тата васкамасăр, сăпайлăн калаçма пĕлекенскер. Пăралуклă пукане. Çавăнпа унăн аллисене пăралукпа хускану тутармалла. «Унпа ĕçлеме мана Зоя Петровна вĕрентетчĕ. Малтанах вăл пукане хăй аллине мĕнле çупнине кăтартрĕ, – аса илет Ольга Алексеевна. – Пукане йывăррипе спектакльте алă питĕ ывăнатчĕ.

Тăрăшни харама кайман. Ку ăнăçлă сăнар хыççăн артистка вылянă рольсем пĕрин хыççăн тепри черетленнĕ: Усал кăмпа, Хырай тата Юханшыв ("Шăна кăмпи" пьеса-юмах); Хĕвел ("Три поросенка" ); Юмахçă, Асламăшĕ тата Кайăк ("Снежная королева"); Мулкач ("Заяц-Победитель"); Шăнкрав курăкĕ ("Самый большой друг"); Рапунцель ("Чудеса королевства Гримм"); Асламăшĕ тата Сысна çури ("Ну, Волк, погоди!"); 1-мĕш актриса, Пакша çури тата Мулкач ("Бука"); Чуче ("Чуче"); Тилĕ ("Ежик и Елка"); Мулкач ("Новогодние снежинки"); Элпи ("Эпĕ халь телейлĕ"); Мария Петровна Бояркина ("Беда от нежного сердца"); Илюша, Король арăмĕ Эмаль тата Кариес король ("Доктор Зубболит"); Сысна, Шăпчăк тата Качака ("Принцесса и Свинопас"); Оксана ("Ночь перед Рождеством")... Вун-вун сăнар. Кашнинех тĕрлĕ мелпе выляттарса хускатмалла, калаçтармалла. Чылай чухне юрламалла та, ташламалла та. 2004 çултанпа Ольга Тарасова кашни Çĕнĕ çул уявĕнчех – Юрпике. Хамăр театрта та, е урăх çĕре кайсан та, яланах: "Кун пек Юрпикене ăçтан тупнă эсир?"– тесе тĕлĕнеççĕ, савăнаççĕ куракансем.

Халĕ артистка "Конек-Горбунок" лартăмри Юмахçă сăнарне хатĕрлет. Ака уйăхĕнче театрта çĕнĕ премьера – С. Мерзляков çырнă "Три подружки" пьеса-юмах сцена çине тухать. Унта Ольга Тарасова Аленкăна вылять.

– Рольсенчен чи юратни – Оксана, – тет Ольга Алексеевна. – Мана Пакшана выляттарма çăмăл. Рапунцель те килĕшет. Элпи сăнарĕ те асрах... Асанне пулма та интереслĕччĕ. Ăна чунпа выляттăм. Спектакль пĕтнĕ çĕре вăй та юлмастчĕ...

## Аслă пĕлӳллĕ специалист

2012 çулта Ольга Тарасова университет дипломне илнĕ. Вĕреннĕ чухне те пур уява хастар хутшăннă вăл. Яланхиллех уявсене ертсе пынă. Питĕ кăсăклă пулнă вĕренме. Уйрăмах режиссер тата актер ăсталăхĕпе пĕлӳ илесси. Татьяна Алексеевна Гордеева преподаватель театр искусствипе тĕплĕн, тарăн паллаштарнă, çавăн пекех спектакльсене сӳтсе-явма та хăнăхтарнă.

Дипом ĕçне Ольга Тарасова К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ачасем валли хăй çырнă "В гостях у клоуна Снежинки" Çĕнĕ



çул программипе хӳтĕленĕ. Комисси ун ĕçне питĕ лайăх паллăпа хакланă. Кунта çак театрăн илемлĕх ертӳçи, СССР халăх артисчĕ Валерий Николаевич Яковлев ăна ырă сĕнӳ-канашпа пулăшнă. Артистсем те, сасă тата çутă енĕпе ĕçлекенсем те – пурте тăрăшнă.

Пукане театрĕнче Ольга Тарасова 2012 çулта хăй çырнă "В гостях у Лунтика" (Çĕнĕ çул программи) тата 2014 çулта - В. Гуровăн "Приключение на Масленицу..." тата хăй йĕркеленĕ "Ай-да, Масленица!.." лартăмсене сцена çине кăларнă.

## Тĕрлĕ енлĕ пултарулăх

Шупашкарта пулса иртекен чылай уява хутшăнать Ольга Тарасова.

2013 çулта "Пĕртăвансем" илемлĕ фильмра тӳрех икĕ сăнара – йĕкĕрешсене (хулари спортсменкăпа ялти сутăçа) ĕненмелле калăпларĕ.

2014 çултанпа Чăваш наци радио эфирĕнче ачасем валли "Уйăхпи юмахĕсем" передача янăрать. Çавăнта юмахсене вулакансенчен пĕри тата Мăрăлкка кушак пулса калаçаканĕ – Ольга Тарасова. – Радио итлекенсене куçăмпа курмасан та, вĕсене туятăп. Çавăнпа татах та тăрăшатăн...

Кăçалхи нарăс уйăхĕнчен ку радиорах "Каçхи микс" программăна тӳрĕ эфирта ертсе пыраканĕ те Ольга Алексеевна. Итлекенсем халĕ ăна Ольга Евет тесен пĕлеççĕ.

## Унăн кил-йышĕ

Ольга Алексеевнăн мăшăрĕ те – Николай Анатольевич Тарасов театр артисчĕ. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче 2003 çултанпа вăй хурать. Сцена ăсталăхĕ енĕпе ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ. Вĕсен пĕр хĕрача – Вика. Халĕ вăл пĕрремĕш класа çурет.

– Юратнă ĕçпе эпĕ питĕ савăнатăп, – тет Ольга Алексеевна. – Театрăн пуласлăхĕ пур. Хальлĕхе çамрăк артистсем те ĕçлеме килеççĕ. Куракансем те пур, спектакльсене çӳреççĕ. Маншăн вара тăван театр çемье пекех...

Кун çумне мĕнех хушайăн? Ăнăçу хыççăн ăнăçу сунатăп çеç пултаруллă та çепĕç аслă Ольга Тарасовăна. Ĕмĕтӳ пурнăçланма сывлăху пултăр!

***Геннадий КИРИЛЛОВ,***
***ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ.***

**Сăнӳкерчĕксенче:** Юратнă сăнарĕпе – Рапунцель пуканепе (2010 çул). Артистка çемйи.